# СĂВАПЛĂ ИОАНН ТУРСĂМАХÇĂ АПОСТОЛ МĔН ПУР ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ВИÇÇĔМĔШ ÇЫРУ

### 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Ватă çынран – савнă Гай патне. Эпĕ сана чăнласах юрата-
тăп. 2 Савнă тăванăм! Эпĕ санăн сывлăхушăн кĕлтăватăп, чуну
ырăланса пынăçемĕн санăн пурне те ăнăçтарса пымалла пултăр-
ччĕ тетĕп. 3 Ёненекен тăвансем эсĕ Турă чăнлăхне чунпа парăнни
çинчен килсе каласа кăтартрĕç те, эпĕ питĕ савăнтăм. 4 Ачамсем
чăнлăхпа çӳреççĕ тени мана пуринчен те ытла савăнтарать.

*Пĕр-пĕрне пулăшасси тата чăрмавсем*

5 Савнă тăванăм! Эсĕ ёненекен тăвансемшĕн, уйрăммăнах çул
çӳрекеннисемшĕн, тăрăшса чăн-чăн Христос çынни пек тăва-
тăн. 6 Вĕсем ёненекенсем умĕнче сан юратулăху çинчен çирĕп-
летсе пĕлтерчĕç. Эсĕ вĕсене, Турра юрăхлă пек, çул çине лайăх
пуçтарса-хатĕрлесе яр. 7 Мĕншĕн тесен вĕсем урăх халăх çынни-
сенчен нимĕн илмесĕрех Христос çинчен вĕрентме çула тухса
кайнă. 8 Çапла ёнтĕ пирĕн, чăнлăхшăн тăрăшакансене пулăшас
тесен, унашкаллисене хапăл тăвас пулать.
9 Ёненекен ушкăнрисем патне эпĕ çыру çырса ятăм, анчах
та вĕсен пуçлăхĕ Диотреф, хуçаланма юратаканскер, пире йы-
шăнмасть. 10 Çавăнпа та эпĕ, пырас пулсассăн, вăл мĕн хăтланса

пурӑнни ҫинчен аса илтерӗп. Вӑл пире усал сӑмахсем каласа хӑртать. Унпа та ҫырлахмасть-ха: вӑл ӗненекен тӑванӑмӑрсене хӑй те йышӑнмасть, йышӑнас текенсене те чарать. Кам ҫул ҫӳрекен тӑванӑмӑрсене хапӑл тӑвать, ҫавсене Диотреф чиркӳрен хӑваласа ярать.

11 Савнӑ тӑванӑм! Усаллинчен мар, ырринчен тӗслӗх ил. Ырӑ
тӑвакан ҫын вӑл Турӑран, усал тӑвакан вара Турра пӗлмест.
12 Димитрий ҫинчен пурте лайӑхпа кӑна асӑнаҫҫӗ, чӑнлӑх хӑй ун
ҫинчен каласа ҫирӗплетет. Ун ҫинчен эпир те шантарсах калатпӑр, эпир ҫирӗплетни чӑн пулнине эсир хӑвӑр та пӗлетӗр.

*Юлашкинчен калани*

13 Манӑн сирӗн патӑра ҫырса ямалли нумай, анчах та чернил-
па, ҫыркӑчпа ҫырнипех ҫырлахас килмест. 14 Сан патна ҫитсе
куҫа-куҫӑн курса калаҫасса шанатӑп. 15 Канӑҫлӑх пултӑр сана!
Тусусем сана салам яраҫҫӗ, эсӗ те тусӑмӑрсене ятран салам кала. Аминь.